27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1944
АВГУСТ
6
ВЫРСАРНИКУН
154(6649) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Сахал йышпа ӗҫлесех ытларах продукци туса кӑларар

Пирӗн ҫӗршыври фабрикӑсемпе заводсенче комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисем хушшинче сахал йышпа ӗҫлесех ытларах продукци туса кӑларассишӗн социализмлӑ ӑмӑрту саралса пырать. Ҫак пуҫару халӑх хуҫалӑхӗшӗн, фронтпа ҫӗршывшӑн кирлӗ те паха ӗҫ пулса тӑрать. Продукци туса кӑларассине ӳстерни ҫӗнтерӳ сехетне ҫывхартма пулӑшать.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисен хушшинчи социализмлӑ ӑмӑрту малта пыракансен опычӗ ҫинче кӑтартса парать: сахал йышпа ӗҫлесех ытларах продукци туса кӑларас тесен, чи малтан, ӗҫ кунӗпе туллин усӑ курмалла, квалификацие ӳстерсе пымалла, ӗҫе тӗрӗс организацилесе тытмалла, ӗҫе механизацилемелле.

Ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводра тимлӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Унта комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисем 70-рен те иртет. Ҫав бригадӑсенче ҫамрӑксен ӗҫри квалификацине ӳстерес, дисциплинӑна ҫирӗплетес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫапла, Чеборова, Апокина юлташсен бригадисенче техника вӗренӗвне организациленӗ. Хашпӗр цехсенче экзаменсем пама та тытӑннӑ ӗнтӗ. Комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисен членӗсем ӗҫ ҫине социализмла пӑхас тӗлӗшпе пример кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем оборудованисемпе инструментсене перекетлӗн тыткалаҫҫӗ, ӗҫ вырӑнне таса тытаҫҫӗ. Ҫавна пула вӗсем производство планне тултарас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫапла, пӗр цехра производство планне, пуринчен ытла, комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисем пурнӑҫа кӗртнӗ. Уйрӑм бригадӑсем кашни кун планне ик-виҫӗ хут ирттерсе тултараҫҫӗ. Самахран, Шимлых, Натейкина, Апокина тата ытти чылай юлташсен бригадисем виҫшер норма ытла пурнӑҫлаҫҫӗ.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисем ӗҫре те, пурнӑҫра та пример пулса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ҫамрӑксен хушшинче бригадӑсене пӗтӗмпех тӳрем пулас текенсем нумай. Пӗр цехри работница Тания Федорова бригадӑра ӗҫлени пысӑк усӑ панни ҫинчен ҫапла ҫырать:

„Пирӗн цехра эпӗ ӗҫлекен участок нумай вӑхӑт хушши кая юлса пычӗ. Участокра ӗҫ дисциплини ҫӳрӗкӗ, нормана тултарайманнисем чылайӑшӗнче. Эпӗ ӗҫе мӗнле йӗркелесе лайӑхлатасси ҫинчен шутлаӑр. Ытти хӗрарӑмсем стахановла ӗҫлеҫҫӗ. Мӗншӗн-ха эпир вӗсем пек ӗҫлеме пултараймастпӑр?

Хамӑн юлташсене Н. Кубарева, Л. Сюсюкина, В. Ельцова тата Морелан... ҫамрӑксен фронтовой бригадине организацилесси ҫинчен калаҫрӑм. Вӗсем ман шухӑшсемпе килӗшрӗҫ, эпир бригада организацилерӗмӗр.

Бригадӑра ҫамрӑксем чылай. Пирӗн хушшӑмӑрта кунсерен пуҫласан ӗҫсем ӑнса пыма тытӑнчӗҫ. Сменӑри задание ӑнӑҫлӑн тултарма пуҫларӑмӑр.

Ҫак эпир ҫӗнӗ нормӑсемпе ӗҫлетпӗр. Эпир куллен кунӗн плана 250—270 процент тултаратпӑр. Манӑн бригадӑри хӗрачасем „чи лайӑх штамповщица“ ятне илессишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ“.

Сахал йышпа ӗҫлесех ытларах продукци туса кӑларассишӗн пыракан ӑмӑртӑва Канашри вагон юсакан заводра, Володин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводра анлӑн саралса пырать.

Анчах та хашпӗр предприятисенче партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсем, хуҫалӑх руководителӗсем комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисен паха пуҫарӑвне сарса ярассишӗн кирлӗ пек ӗҫлемеҫҫӗ-ха. Ҫакӑ предприятисенчи пуян резервсемпе усӑ курассине, ӗҫ тухӑҫлӑхне малалла ӳстерме чӑрмантарать.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисен хушшинчи сахал йышпа ӗҫлесех ытларах продукци туса кӑларассишӗн пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва сарни предприятисенче ӗҫе лайӑхлатма, фронта пулӑшассине вӑйлатма май парать.

Ҫак ӗҫре комсомол организацийӗсен, ҫав шутра профсоюз организацийӗсен, хуҫалӑх руководителӗсен ҫав паха пуҫарӑва пур майсемпе те сарса пымалла. Малта пыракан бригадӑсен опычӗпе тимлӗн сармалла, ӗҫ кунӗпе туллин усӑ курма, ӗҫе тӗрӗс организацилесе тытма кирлӗ. Ҫамрӑксен хушшинче политикӑлла-массӑлла ӗҫе лайӑхлатмалла, вӗсене воспитани паракан ӗҫе вӑйлатмалла. Комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисем фронта пулӑшас тӗлӗшпе ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума май парать.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 4-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 4-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем РЕЗЕКНЕ (Режица) хулинчен хӗвеланӑҫнерехре, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла тытса илнӗ. Вӑл шутра—ОСАГАЛЫ, РАДЖЕЛИ, БОРБАЛИ, РАКСАЛА, ГРОМАЛТИ, КРОПИНИ, ЛУКСТИ ятлӑ пысӑк ялсем тата МЕЖАРЕ ятлӑ чугун ҫул станцийӗ.

КАУНАС (Ковно) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла тапанса, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла тытса илнӗ. Вӑл шутра—ШИДЛОВО, ЖОГИНО, ГЕРМАНЫ, БЕТИГОЛА, ПОЛЕПИ, УГЯНЫ, ЭЙРАГОЛА, ГЯЛОВО, ЧЕКИШКИ, ВИЛЬКИ, ЛЕКАЙЦЕ, НОВОСАДЫ, ПОЛОБЕ, ПОТАШЕ ятлӑ пысӑк ялсем.

МАРИАМПОЛЬ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑрарахра пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра—ПОТЫЛЬЧЕ, ЭГЛОБОЛЕ, ЮРГЕЗИОРЫ, ТРАКЯНЫ, ШИПЛИШКИ, КАЛЕТНИК, ЛИННЯК, НОВА-ВЕСЬ, КРАСНОПОЛЬ, РЕМЕНКИНЕ ятлӑ пысӑк ялсем тата ТРАКИШКИ, КАЛЕТКНИК ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

САНДОМИР хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем Висла шывӗн сулахай хӗрринчи плацдарма анлӑлатасшӑн малалла ҫапӑҫнӑ, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра—ГЖИБУВ, ПЕЧОНОГИ, СТОПНИЦА, ПАЦАНУВ, ГОРИСЛАВИЦЕ, СТРОЖИСКА, НОВЫ-КОРЧИН ятлӑ пысӑк ялсем.

ЖЕШУВ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем наступлени туса пынӑ. Тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра—ВАБУЛЕ, ГЫКИ-ДЕМБЯКИ, ПОДЛЕСЬЕ, ДОБРЫНИН, ОЦЕКА, СЕНДЗИШУВ, РОПЧИЦЕ, ЗАГУЩИЦЕ ятлӑ пысӑк ялсем тата ЖОХУВ, СЕНДЗИВ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

КАЛУШ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла тапанса пынӑ, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра—РУДНИКИ, ДЕЖОВ, ТЕЙСАРУВ, ЮСЕПГЫЧИ, МАХЛИНЕЦ, СЕХУВ, СОКОЛОВ, ЯКУБОВ ятлӑ пысӑк ялсем тата ПЯСЕЧНА ятлӑ чугун ҫул станцийӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Августӑн 3-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 53 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 30 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Каунас (Ковно) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Тӑшман хушӑри оборона позицийӗсем ҫинче ҫирӗпленсе ларма хӑтланнӑ. Анчах та унӑн ӗҫӗсем ӑнӑҫсӑр пулнӑ. Пирӗн пехотинецсем, татӑклӑн пыра-пыра ҫапса, нимӗҫсене ку позицисенчен сирсе ыватнӑ. Совет чаҫӗсем тӑшманран вӑрманлӑ пӗр пысӑк вырӑна тасатнӑ та анлӑ фронтпа Дубисса шывӗ ҫине тухнӑ. Нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене пӗр пине ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшманӑн 15 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. 20 тупӑпа миномет, 40 пулемет тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. 150 нимӗҫе тыткӑна илнӗ.

* * *

Мариамполь хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла куҫса пынӑ. Нимӗҫсем оборонӑра тӑма майлӑ вырӑнпа усӑ кураҫҫӗ. Ҫапӑҫусен районӗнче кӳлӗсемпе шурлӑхсем питӗ нумай, ҫавсем наступлени тума кансӗрлеҫҫӗ. Пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла туртса илнӗ. Пӗр соединени чаҫӗсем, нимӗҫсене тӗреклетнӗ пунктсенчен ҫапа-ҫапа кӑларса, 20 километр таран малалла куҫнӑ. Хаяр ҫапӑҫусенче пирӗн подразделенисем Краснополь районӗнче тӑшман пехотин батальонне аркатса тӑкнӑ. Нимӗҫсен 6 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Совет чаҫӗсем Сувалки хулинчен 7 километр ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Нова-Весь ятлӑ халӑх пурӑнакан пункта туртса илнӗ.

* * *

Сандомир хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем Висла шывӗн сулахай хӗрринче малалла ҫапӑҫнӑ. Тӑшман, пехотӑпа танксен пысӑк вӑйӗпе контратакӑсем туса, совет ҫарӗсен наступленине чарса лартма хӑтланать. Уйрӑм участоксенче алӑ вӗҫҫӗн тытӑҫа-тытӑҫа илнӗ. Нимӗҫсене каялла сире-сире ыватса, пирӗн ҫарсем 15 километр таран малалла куҫнӑ, шоссе ҫулӗсен Стопница ятлӑ узелне туртса илнӗ. Пӗр соединенири пехотинецсемпе артиллеристсем икӗ кун хушшинче 2.200 нимӗҫ салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ, 26 танк, вӗсенчен 4-шӗ „тигр“ йышшисем, 8 бронемашина персе ҫӗмӗрнӗ тата 100 автомашина ытла пӗтерсе тӑкнӑ. 7 танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ, 19 хир туппи, ҫар хатӗрӗсем турттарса пыракан темиҫе обоз тата чугун ҫул эшелонӗ тытса илнӗ. Пирӗн тепӗр соединенин чаҫӗсем, малалла куҫса пырса, Саксонски дивизие, халь ҫеҫ Ваттам Германирен Совет Союзӗпе Германи фронтне илсе килнӗскере, пысӑк ҫухатусем кӳнӗ.

* * *

Жешув хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тӑшман хӑйӗн группировкине вӑйлӑлатнӑ та хытӑ хирӗҫ тӑрать. Гитлеровецсемпе ҫапӑҫса малалла куҫса пырса, пирӗн ҫарсем халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ. Пӗр чаҫри боецсем тӑшман пехотин икӗ батальонне аркатса тӑкнӑ, вӗсен пӗтӗм хӗҫпӑшалне тытса илнӗ. 200 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Калуш хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем тӑшманӑн темиҫе контратакине сирсе янӑ, 600 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. 120 нимӗҫе тыткӑна илнӗ. Тепӗр соединени чаҫӗсем, тӑшмана сире-сире ыватса, гитлеровецсене пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Ҫак юлашки кунсенче нимӗҫсенчен хир тупписем, танксемпе кӗрешмелли тупӑсем тата зенитнӑй тупӑсем нумай тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата 200 пулемет, 180 автомашина тытса илнӗ. Хашпӗр участоксенче автоматсемпе тата пулеметсемпе хӗҫпӑшалланнӑ нимӗҫсем венгерсен пехотине атакӑна кӗме хӑваланӑ. Атакӑна кӗме килӗшмен венгер салтакӗсен пысӑк ушкӑнне нимӗҫсем персе пӑрахнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 195-мӗш штурмовой полкӗн тыткӑна лекнӗ командирӗ Вальтер Холлендер полковник ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Нимӗҫ командованийӗ совет ҫарӗсем ку ҫура кӑнтӑрта наступлени тума пуҫлаҫҫӗ тесе шутланӑ. Вырӑссем Орша хулинчен иртсе кайсан та, пирӗнтен нумайӗшӗ вырӑссен Центральнӑй фронтри наступленийӗ пирӗн ҫарсене кунтан урӑх ҫӗре куҫарса кайма парас мар тесе кӗрешни кӑна пулса тӑрать тесе шутлатчӗҫ. Сталинград патӗнчи катастрофа хыҫҫӑн эпӗ ҫакна уҫҫӑнах ӑнланса илтӗм: вӑрҫӑ вырӑссем майлӑ ҫаврӑнса ӳкрӗ. Совет ҫарӗсен юлашки наступленийӗ эпир ку таринччен тӳссе ирттернӗ пур наступленисенчен те чи пысӑкраххи те хӑватлӑраххи пулса тӑрать. Ку наступлени вырӑссене ҫав тери пысӑк ҫитӗнӳсем кӳчӗ. Ҫак наступленири ҫитӗнӳ Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑйӗсем нимӗҫсеннинчен нумай йышлӑраххинчен кӑна килмест. Вырӑс ҫарӗсен ҫитӗнӗвӗ, пуринчен малтан, вӗсем нимӗҫсен тактикинчен нумай маларах тӑракан ҫӗнӗ тактикӑна пурнӑҫа кӗртнинчен килет. Нимӗҫсен ҫарӗ ҫак вӑрҫӑра чи йывӑр поражени тӳсрӗ. Ҫак поражени вӑрҫӑ ӗҫӗсем малалла мӗнле пулса пырассине татса парӗ».

Белоруссии тӑрӑх киноаппаратпа

Белоруссири киностуди Совет Союзӗн кинохроникипе пӗрле «Освобожденная Белорусь» ятлӑ документлӑ фильм хатӗрлет. Хӗрлӗ Ҫар наступлени пуҫласа янӑ хыҫҫӑн Белоруссири фронтсенче 30 кинооператор Хӗрлӗ Ҫар Белоруссире ҫӗнтерсе пынине ӳкерсе илнӗ. Пирӗн ҫарсем Друть шывӗпе Березина шывӗ урлӑ каҫнине, Бобруйскпа Минск районӗсенче хупӑрласа илнӗ нимӗҫ дивизийӗсене аркатса тӑкнине, пирӗн ҫарсем тытса илнӗ трофейӑсене, тыткӑна илнӗ нимӗҫсен колоннисене ӳкерсе илнӗ. Хӗрлӗ Ҫар Минск хулине пырса кӗнине тата Минск халӑхӗ совет боецӗсене ҫав тери савӑнса кӗтсе илнине те ӳкерсе илнӗ.

Ҫак фильма Белоруссин искусствӑсен таба тивӗҫлӗ деятелӗсем Корш-Саблинпа Микола Садкович режиссерсем туса хатӗрлеҫҫӗ. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКА УЙХИРӖСЕНЧЕ

Пахалӑх—ӗҫӗн илемӗ

Вӑхӑтра акса, лайӑх пӑхса ҫитӗнтернӗ тырӑ уйхирте тинӗс пек хумханать. Пиҫсе ҫарӑлнӑ сулӑмлӑ пучахсем ӑшӑ ҫил варкӑшнипе пӗрре малалла сулӑнса, тепре тӳрленсе хӑйсен вырӑнӗсене йышӑнаҫҫӗ. Ыраш хӑй пулса ҫитни ҫинчен пӗлтернӗн, пӳлмене йышӑнма ыйтнӑн туйӑнать.

„Красное Сормово“ колхоз членӗсем ӑнса пулнӑ тырра васкасах выраҫҫӗ. Ывӑҫ тулли ывӑҫла-ывӑҫла, кӑчӑрт-кӑчӑрт касаҫҫӗ те вӑшт ҫавӑрса ҫыхӑ ҫине хураҫҫӗ. Часах кӗлте тулать, тӗмӗ пулать. Хумханакан ыраш вырӑнне майра пуҫӗсемпе ҫӗмелсем ларса тухаҫҫӗ. Ыраш уйӗ майӗпенех катӑлса пырать. Колхозниксем тӑватӑ кун хушшинче ыраш лаптӑкӗн ҫуррине вырнӑ.

Ку колхозра ӗҫӗн хӑвартлӑхӗпе пӗрлех, пахалӑхӗ ҫине те тимлӗн ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ. Пахалӑх—пирӗн ӗҫӗн илемӗ, теҫҫӗ кунта. Чӑнах та, вӗсен ӗҫӗ ҫине пӑхсан чун савӑнать. Тӗплӗ те типтерлӗ, пӗр тӑккаласа хӑвармасӑр выраҫҫӗ вӗсем тырра. Колхозница тулнӑ кӗлтине сыхать те ҫакӑнса тӑракан пучахсене ҫурлипе таварса чикет. Ҫӗре татӑлса ӳкнисене пӗрер пучахӑн пуҫтарать. Ҫӗмел тӑваканни те ҫавӑн пекех, ҫӗмел туса пӗтернӗ хыҫҫӑн юлнӑ пучахсене пӗрчӗнпӗрчӗн пухать.

Эпир колхоз председателӗпе Петр Николаевич Майков юлташпа вырнӑ ыраш хирӗ тӑрӑх пыратпӑр. Ниҫта та ларса юлнӑ тырӑ, выртса юлнӑ пучах курма ҫук. Ыраша колхозниксем кашни уйрӑм участокпа выраҫҫӗ. Анчах ӗҫ пахалӑхӗ пурин те пӗр пек лайӑх.

— Пурне те тирпейлӗ ӗҫлеме вӗрентме ҫӑмӑл мар,—тет Петр Николаевич пахалӑх ҫинчен сӑмах пуҫарсан. —Пахалӑхшӑн кӗрешме кашнин ӗҫне уйӑрӑмӑн пӑхса йышӑнни пулӑшать. Ҫапла тусан колхозниксем пахалӑх ӗҫӗн тӗп кӑтартӑвӗ пулса тӑнине ӑнланса илеҫҫӗ.

Майков ертсе пыракан колхозра хӑвӑрт та лайӑх ӗҫлекенсене ӗҫкунӗсем хушса параҫҫӗ. Сӑмахран, 2-мӗш бригадӑри Ефремова, Ковалева, Игнатьева юлташсем ыраша нормӑпа пӑхнинчен 1,5 хут тухӑҫлӑрах выраҫҫӗ. Вӗсен ӗҫӗ тирпейлӗ, пучахсем выртса юлнине курмастӑн. Бригадир вӗсене ҫавӑншӑн виҫшер ӗҫкунӗ ытла ҫырса парать.

Тӗмӗсем хушшипе 1-мӗш бригадӑн бригадирӗ Ефим Андреевич Смелов утса пырать. Смелов ватӑ бригадир. Вӑл ӗҫе ҫиелтен тунине юратмасть. Вӑли-шали ӗҫлекенсене те куҫран калама именмест. Ӳксе юлнӑ пучаха илсе: „Кӑна кам валли хӑвартӑн?“ тесе ыйтать, тӑккаласа хӑварнӑ колхозник енне ҫаврӑнса. Ку колхознике вара аван марран туйӑнать. Ҫавӑнпа вӑл малашне тӗплӗн ӗҫлеме тӑрӑшать.

Пахалӑхшӑн кунта пӗр колхоз председателӗ ҫеҫ мар, кашниех тӑрӑшать. Пучах юлмасть-и, кӗлтесене пушӑ ҫыхман-и, ҫӗмеле ҫӑмӑр каймалла туман-и,—ҫавӑн пек мӗнпур ӗҫсене асӑрхаса тӑраҫҫӗ бригадирсем. Колхозри пахалӑх комиссийӗ те хӑш бригада мӗнле вырнине кашни кунах пӑхса ҫаврӑнать.

...Кӑнтӑрлахи кану вӑхӑчӗ. Колхозниксем пӗрле апатланаҫҫӗ. Агитатор Совет Информаци Бюровӗн юлашки хыпарӗсене пӗлтерет. „Августӑн 1-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Каунас хулине ирӗке кӑларнӑ...“ Фронтри ҫӗнӗ хыпарсене каласа панӑ хыҫҫӑн агитатор колхозри ӗҫсем ҫине куҫать. Пахалӑх ҫинчен сӑмах пуҫлать. Пахалӑх ӗҫре мӗнле пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен калать. Вӑл ҫавӑнтах Демьян Бедный поэтӑн пахалӑх пирки „Правда“ хаҫатра пичетленнӗ сӑввине вуласа парать. „Пӗр процент хӑварнӑ тӑкак пӗтӗм Совет Союзӗпе илсен 70 миллион пӑта ҫитет. Вӑл тырӑпа 1.070 вагон тулать. Ҫав вагонсем Мускавпа Ленинград хушшине йышӑнаҫҫӗ“—сӑвӑри ҫак примера илсе, тӗплӗн ӑнлантарса парать вӑл.

— Ҫапла, тырӑ ытларах илесси хамӑртан килет. Типтерлӗ ӗҫлесе пӗр пӗрчӗ те, пӗр пучах та уя хӑварар мар. Ҫӗр мӗн панине веҫех пухса илер,—теҫҫӗ колхозниксем.

Колхозниксен сӑмахӗ ҫилпе вӗҫсе каймасть, хӗрӳ ӗҫре пурнӑҫланса пырать.

Т. ИВАНОВ.
(Хамӑр корр.)

Орининно, Муркаш р-нӗ.

Тырпула пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртесси—комсомолецсен тивӗҫӗ

ЕЛЧӖК. (Телефонпа). СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ „1944 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен“ йышӑннӑ постановлени колхоз хресченӗсемшӗн, комсомолецсемпе ҫамрӑксемшӗн ӗҫри программа пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та эпир ӑна чи малтан комсомолецсемпе ҫамрӑксене ӑнлантарса пама тӑрӑшрӑмӑр. Комсомолӑн пуҫламӗш организацийӗсем ку ыйтупа ятарласа пухусем ирттерчӗҫ. Халӗ вӗсем ҫав постановление колхозниксене уйхирте ӗҫленӗ ҫӗрте, кану вӑхӑчӗсенче ӑнлантарса параҫҫӗ.

Ӗҫчен комсомолецсемпе ҫамрӑксем, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисене ҫӗнтерсе пырса, колхозлӑ яла кӑҫалхи ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттерме пулӑшрӗҫ. Халӗ ӗнтӗ, тырпул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра, вӗсем ҫав опыта ҫирӗплетсе, малалла ӳстерсе пыраҫҫӗ.

Тырпул пухса кӗртнӗ ҫӗрте халь 489 комсомолец ӗҫлет. Вӗсенчен 16-шӗ уйхир бригадисен бригадирӗсем, 116 ҫын—машиноведсем, 2 ҫын—комбайнерсем, 94 ҫын—кӗлте ҫыхакансем, 112 ҫын—выракансем, 33 ҫын—авӑн ҫапакансем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Вырнӑ тырра ҫийӗнчех ҫапса государствӑна леҫсе парас тӗлӗшпе 24 колхозра комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисем, 16 колхозра транспорт бригадисем тунӑ. Уйрӑмӑнах „Комбайн“ колхозри транспорт бригади лайӑх ӗҫленине палӑртмалла. Кунта колхозниксем тырӑ вырма тухнӑ малтанхи кунсенчен пуҫласах кӗлте турттарса капана хывассине, татти-сыпписӗр авӑн ҫапассине, государствӑна тӗштырӑ леҫессине йӗркеленӗ. Пур ӗҫе те пӗр вӑхӑтрах ӗлкӗрсе пыма турттӑм вӑйӗ ҫителӗклӗ пултӑр тесе, вӗсем 8 вӑкӑра ӗҫе вӗрентнӗ. Ҫак кунсенче комсомолецсемпе ҫамрӑксем, ҫав вӑкӑрсемпе Хӗрлӗ обозсем организацилесе, государствӑна 30 центнер ҫӗнӗ тырӑ леҫсе панӑ.

Тырӑ вырса пухнӑ, авӑн ҫапнӑ ҫӗрте тырпула ҫирӗп шута илес тата ӑна лайӑх сыхласа усрас тӗлӗшпе ӗҫлеме эпир 31 ҫӗрте комсомолецсен постне турӑмӑр. „Малалла“, „Пахарь“ тата Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсенчи постсем хӑйсен ӗҫне лайӑх туса пыраҫҫӗ.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксем, тырпул пухса кӗртнӗ ҫӗрте лайӑх ӗҫлесе, ыттисене пример параҫҫӗ. Акӑ Максим Горький ячӗпе тӑракан колхозри машиноведсем—тӑваттӑшӗ те комсомолецсем. Вӗсенчен кашниех кунсерен 4—5-шер гектар выраҫҫӗ. Осиповапа Кондратьева комсомолкӑсем кунсерен 0,30—0,35-шер гектар ҫинче кӗлте ҫыхса пыма ӗлкӗреҫҫӗ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра комсомолец Кузьмин жнейкӑпа кунсерен 4-шар гектар вырас вырӑнне 6-шар гектар вырать. Кун пек тӗслӗхсем татах та пур.

Эпир, тырпул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра партипе правительство йышӑннӑ постановление тӗп вырӑна хурса ӗҫлесе, умра тӑракан ответлӑ ӗҫсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртӗпӗр.

А. ПАВЛОВА,
ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксен активлӑхӗ

КӲКЕҪ, августӑн 5-мӗшӗ. (Телефонпа). Паянхи куна районри колхозсем 1916 гектар ҫинчи ыраша вырса ҫӗмелсене хывнӑ. Вӑл шутран 144 гектарне машинӑсемпе вырнӑ. Тырӑ вырас тӗлӗшпе Иккассинчи „Первое Мая“, Сарапайкасси ялсоветӗнчи „Урожай“ тата „Трактор“ колхозсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенче жнейкӑсемпе туллин усӑ кураҫҫӗ.

Тырӑ вырнӑ ҫӗрте комсомолецсемпе ҫамрӑксем пысӑк активлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Ҫапла, Хыркассинчи „Чашлавар“ колхозри К. Абрамова юлташ ертсе пыракан звено членӗсем кашниех куллен 2,5—3-шер ӗҫкунӗ тӑваҫҫӗ. Ҫамрӑксене кулленхи ӗҫре вӗрентсе пыма 65 ҫулхи колхознике П. Григорьев юлташа уйӑрнӑ. Вӑл ҫӗмелсем тума тата ытти ӗҫсене вӗрентет. Ҫакӑнпа пӗрлех ҫамрӑксен звенинче ӗҫлекенсем агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе анлӑн сарса пыраҫҫӗ. Шуркка ялсоветӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри комсомолецсем те пур ӗҫсенче те малта пыраҫҫӗ. Вӗсем колхозниксене хӑйсен стахановла ӗҫӗпе тата большевикла сӑмахпа хаваслантараҫҫӗ.

М. НИКИТИН.

Ӳкерчӗк ҫинче: пирӗн земляк Совет Союзӗн Геройӗ капитан Анатолий Иванов. Нумаях пулмасть вӑл темиҫе кун хушши Шупашкарта пулчӗ. Вӑрҫӑччен Иванов юлташ Шупашкар станцинче ӗҫленӗ.
С. ФРИД фотоӳкерчӗкӗ.

СССР Совнаркомӗнче

И. Е. Репин ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнине палӑртасси тата ӑна ӗмӗр асӑнмалла тӑвасси ҫинчен

1944 ҫулхи августӑн 5-мӗшӗнче вырӑссен аслӑ художникӗ И. Е. Репин ҫуралнӑранпа ҫӗр ҫул ҫитнӗ май СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫапла йышӑннӑ:

1. Мускавра И. Е. Репин памятникне лартас.

2. Ленинград хулинче Пӗтӗм Союзри художество академийӗн территорийӗнче тата Чугуев хулинче (художник ҫуралса ӳснӗ хулара) И. Е. Репинӑн бронзӑран тунӑ кӗлеткисене лартас.

3. Пӗтӗм Союзри художество академийӗн живопись, скульптура тата архитектура институтне И. Е. Репин ятне парас.

4. Ӗҫҫынни депутачӗсен совечӗн Ленинград область исполнительнӑй комитетне И. Е. Репинӑн Куоккаори ҫуртне-музейне, финн оккупанчӗсем ишнӗскерне, 1945—46 ҫулсенче юсаса ҫитерме хушас.

5. СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Искусство ӗҫӗсен комитетне ҫапла тума хушас:

а) И. Е. Репинӑн тӗп произведенийӗсене йышлӑн пичетлесе кӑлармалла;

б) И. Е. Репинӑн художество ҫинчен ҫырнӑ критикӑлла произведенийӗсене тата унӑн ҫырӑвӗсене пичетлесе кӑлармалла.

6. И. Е. Репин пурӑннӑ ҫуртсем ҫине мемориальнӑй хӑмасем ҫапса хурас.

7. Ҫак шкулсенче И. Е. Репин ячӗпе стипендисем памалла тӑвас:

а) Пӗтӗм Союзри художество академийӗн живопись, скульптура тата архитектура институтӗнче—студентсене уйӑхне 400-шер тенкӗ памалли 5 стипенди тата аспирантсене уйӑхне 800-шер тенкӗ памалли 2 стипенди;

б) Мускаври художество институтӗнче—студентсене уйӑхне 400-шер тенкӗ памалли 4 стипенди тата аспирантсене уйӑхне 800-шер тенкӗ памалли пӗр стипенди;

в) Киеври художество институтӗнче—студентсене уйӑхне 400-шер тенкӗ памалли 3 стипенди;

г) Тбилисири художество академийӗнче—студентсене уйӑхне 400-шер тенкӗ памалли 3 стипенди.

Ҫырмалли япаласене хамӑрах тӑвар

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленнӗ май шкулсенче ҫырмалли япаласем вырӑнтах тума пулать.

Ут кӑшкарути тымарӗнчен хура чернил лайӑх пулать. Унӑн тымарне тасатса шывра чылайччен вӗретмелле. Чернил ҫӑрарах пултӑр тесен, вӗретнӗ шывне нумайрах вӑхӑт пӑслантарса лартмалла.

Ҫавӑн пек майпах юман ҫӑпанӗсенчен те (вӗсен сӗткенӗнчен) чернил тӑваҫҫӗ.

Ҫырмалли пура та (мел) ҫӑмӑл майпа хатӗрлеме пулать. Ҫырмари шур тӑма илсе шыва ярса пӑтратмалла та сӗт пек шурӑ шывне тӑрӑлса лариччен тепӗр тирӗк ҫине ямалла. Тӑрӑлса тӗпне ларнӑ хыҫҫӑн ҫиелти шывне такмалла, тӗпне ларнӑ тӑмне 15 сантиметр хулӑнӑш сарса хӗвел ӑшшинче е кӑмакара типӗтмелле. Хытас умӗн пӗрер сантиметр сарлакӑш, 10-шар сантиметр тӑршшӗ касса формӑсем тумалла. Ҫапла типсе ҫитнӗ пурӑ ҫырмалла пулать те вара. Пурӑ тӗпренекен ан пултӑр тесен, шур тӑма 20—25 процент сӗтерне извеҫпе хутшӑнтармалла.

Ф. ТИМОФЕЕВ,
Ильинкӑри ваттам шкулта химие вӗрентекен учитель.

Генерал Макаров

Иван Матвеевич Макаров Шупашкар районĕнчи Солянове ялĕнчен 17 çулта чухне тухса кайнă. Революци çулĕсенче çамрăк артиллерист Макаров хĕçпăшаллă рабочисен отрячĕсемпе пĕрле çапăçнă. Хĕрлĕ гварди тусан, вăл унăн ялавĕсем айне тăнă. 1919 çулччен Макаров хĕвелтухăçĕнчи фронтра пулнă. Унтан ăна Ленинграда вĕренме янă. Тепĕр çулран бронепоезд экипажĕн составĕнче басмачсен пăлхавне пĕтерсе лартма тухса кайнă. Ун хыççăн татах çар шкулĕсенче вĕреннĕ. Вунă çул каярах вăл артиллери дивизионĕн командирĕ пулса тăнă. Унтан полк командирĕ пулнă.

Отечественнăй вăрçа Иван Матвеевич Макаров хăйĕн полкĕпе хамăрăн çĕршыван хĕвеланăçĕнчи чиккисем патĕнче хутшăннă. Макаров чăсĕнчи артиллеристсен фашистла вăрă-хурахсен кĕтĕвĕсене тăтăшах чарса пынă. Вĕсем тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртнĕ.

Макаров чăсĕнчи артиллеристсен ĕçĕсене хаклаcа, дивизи командирĕ çапла каланă:

— Макаровецсем яланах тĕл персе, вĕсен кусĕсем патĕнче ниçта кайма çук. [illegible]

... Пĕр шыв патĕнче тăшман лайăх вырăн йышăннă та пирĕн чăсе персе тăнă.

— Ну, артиллеристсем, „нимĕçсене ăшалăр-ха. Куратăр-и, ава пĕр çурт, уна нимĕçсен штабĕ,— тенĕ Макарова дивизи командирĕ.

Лейтенант Кокорин орудие шыв хĕрнелле тухнă та пеме тытăннă. Çав самантрах çурт çийĕнче хура тĕтĕм явăнма пуçланă. Çак вăхăтра тăшман позицийĕсем патне автомашинăсен колонни çывхарма пынă. Лейтенант татах пеме тытăннă. Машинăсем пĕрин хыççăн тепри сывлăша сирпĕнмĕ пуçланă. Нимĕç салтакĕсем ăçта кирлĕ унта тарма тытăннă.

Çакăн хыççăн тăшман минометсенчен пеме тытăннă. [illegible] Анчах Макаров майоран [illegible] пулман. Вăл [illegible] оборона татса кĕнĕ броневик [illegible] тухнă. Артиллеристсем çапăçма хатĕрленнĕ пек тунă. Çавна кура нимĕçсен броневикĕ çаврăннă та каялла тарнă.

— Кулмалли вăхăт марччĕ ун чухне, анчах манăн боецсем ахăлтатсах кулса ячĕç,—каласа парать Макаров юлташ.

Акă тата Макаров юлташăн ча-

çĕнчи артиллеристсен пурнăçĕнчи тепĕр эпизод. Часть таса уй тăрăх куçса пынă. Ăнсăртран, вăрман хĕрринчен, тăшман пеме тытăннă. Майор Макаров çавăнтах тăшмана хирĕç çапăçма шут тытнă. Малтанхи 30 минута хушшинче совет арттиллерисчĕсем тăшманăн виçĕ батарейине, 8 танкне пĕтерсе тăкнă тата автомашинăсен колоннине салатса янă. Апла пулин те нимĕçсем Макаров чаçне çавăрса илме пикеннĕ.

Майор, дивизи командирĕ хушнипе, артиллеристсене каялла чакма хушать. Артиллеристсем ыраш ăшне кĕрсе çухалнă хыççăн Макаров пĕр йывăç тĕмĕ патĕнче танксене пĕтермелли оруди пуррине асăрхать. Унтах снарядсем те выртнă. Таврара никам та пулман. Макаров оруди патне тăнă та тăшман çине снаряд хыççăн снаряд яма тытăннă. Нимĕçсем пăтранма пуçланă. Вĕсем çакăн пек пуласси не кĕтмен. Юлашкинчен вĕсем, Макарова çавăрса илес шутпа, çĕр çумĕпе шăвăнса малалла кайма тытăннă.

Майор Макаров, пĕтĕм снарядсене персе пĕтернĕ хыççăн, тăшман пăтрашнипе усă курса, орудин замокне салатса тăкнă та вăрман хĕрринче ларакан нимĕççан автомобилĕ патнелле шума тытăннă. Машина патне çитсенех сасартăк сиксе тăрса машина çинче ларакан офицера вĕлернĕ. Шофер ним сас-чĕвсĕр машина çинчен йăванса кайнă. Макаров вара машинăпа хăйĕн чаçнелле кайнă. Мĕн пулса иртнине нимĕçсем малтанах ăнланса та илеймен. Майор нимĕçсем патĕнчен хăвăрт иртсе кайнă. Тăшман ăнланса илнĕ чухне совет командирĕ инçетре пулнă.

Çапах та кĕтмен çĕртен пырса ÿкнĕ снаряд машинăна çул çинчен ывăтса янă. Макаров вара тăна кĕнĕ хыççăн, канав тăрăх шуса хăйĕн чаçне тухнă.

Çак паттăр ĕçсемшĕн майор Иван Матвеевич Макаров пĕрремĕш орден—Хĕрлĕ Ялав орденне илнĕ.

Иван Матвеевич Макаров Сталинград патĕнчи çапăçусене полковник званийĕпе, дивизи командирĕ пулса хутшăнать. Ку вăл 1942 çулхи август уйăхĕнче, гитлеровецсен дивизийĕсем Сталинград патне çывхарса пынă вăхăтра, пулнă. Малтанхи çапăçусем умĕн Макаров чаçне çамрăк боецсем пынă. Вĕсем хушшинче 800 çынна яхăн чăвашсем пулнă. Полковник уншăн питех те савăннă. Вăл чăвашсене уйрăман йĕркеленсе тăма хушнă. Боецсем йĕркеленсе тăрсан, вăл хăйĕн землякĕсемпе паллашнă.

— Эпĕ те Шупашкартан. Хĕрлĕ Çар ретне кĕнĕренпе 20 çул иртрĕ ĕнтĕ,—каласа панă вăл боецсене.— Эсир хăвăр Василий Иванович Чапаев землякĕсем пулнине ан манăр. Чапаев пек паттăррăн çапăçăр.

Халĕ Иван Матвеевич Макаров чăваш халăхĕн ывăлĕсем çинчен çапла каласа парать:

— Начар мар çапăçрĕç вĕсем, дивизи ятне çÿлте тытса пычĕç. Вĕсенчен нумайĕшне орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Вĕсен çĕнтерÿ çулĕ—Днепр патне илсе çитерчĕ. Днепр патĕнче те эпир, Чапаев землякĕсем, паттăррăн çапăçрăмăр.

Иртнĕ çулхи кĕркунне генерал-майор Макаров ертсе пыракан дивизи виçĕ хутчен Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ тав тунине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Халĕ вăл дивизие „Харьковски" тесе чĕнеççĕ.

Макаров генерал-майорăн полкĕсем Полтава, Кременчуг патĕнче паттăррăн çапăçнă хыççăн Днепр патне тухнă. Днепр урлă вĕсем икĕ каç хушшинче каçнă. Днепр урлă каçас ĕçе пĕлсе организациленине пула, Макаров дивизийĕ пĕр çын та çухатман. Кун хыççăн унăн дивизийĕ Украинăна тасатса çитерессишĕн пыракан çапăçусенче чапа тухнă.

Генерал-майор Макаров кăкăрĕ çинче халĕ Александр Невский орденĕ тата икĕ Хĕрлĕ Ялав орденĕсем йăлкăшаççĕ.

Нумай пулмасть вăл хăйĕн ялне курма килсе кайрĕ.

М.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

Чăвашсен Государство Издательствинче çак кунсенче писатель-орденоносец Леонид Агаковăн „Çапăçу хирĕнче" ятлă фронтра çырнă калавĕсен кĕнеки пичетленсе тухрĕ.
Ÿкерчĕк çинче: Леонид Агаков.
Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Тăван çĕршыва, Сталин юлташа парнесем панине çырмалли кĕнеке

Канашри вагонсем юсакан заводра Тăван çĕршыва, Сталин юлташа парнесем пани çинчен çырмалли кĕнеке тунă. Нумаях пулмасть çав кĕнеке çине цех начальникне Михаил Иванович Забиакина, унăн цехĕнчи токаре Наталия Егоровна Егоровăна тата Жебрак юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри токаре Фелла Марковна Серовăна кĕртнĕ. Забиякин юлташ, тĕп участоксенчи ĕçе çĕнетсе йĕркелессине хăй пуçарса пырса, цехри 53 рабочие урăх цехсене куçармалла тата çав вăхăтрах продукци туса кăларассине 40 процент ÿстермелле тунă. Токарь Егорова юлташ ĕç нормине яланах 400 процент тултарса пынă, 2—3 станокпа пĕччен ĕçленĕ вăхăтрах, токарь ĕçне виçĕ работницăна вĕрентнĕ. Серова юлташ нормăна 400 процент таран тултарса ĕçлет, пилĕк рабочие токарь ĕçне вĕрентнĕ.

Колхозниксен укçипе тунă самолета Акимов летчика панă

Куславкка районĕнчи „Путь к социализму" колхоз колхозникĕсем, Ферапонт Головатыйăн пархатарлă пуçарăвне йышăнса, пĕр санитарнăй самолет тума 55 пин тенкĕ укçа пухса паначчĕ. Çакăншăн вĕсем Сталин юлташран саламлă телеграмма илнĕ.

Июнь уйăхĕн вĕçĕнче колхоз правленинчен инçех мар самолет анса ларнă. Унăн икĕ енне те „Чăваш республикинчи «Путь к социализму» колхоз колхозникĕсемпе колхозницисенчен" тесе илемлĕн çырса хунă. Самолет ларнă çĕре часах колхозниксем пухăннă. Савăнăçлă митинг пуçланнă. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Осипов юлташ колхозниксемпе колхозницăсене тав туса сăмах тухса каланă. Унтан колхоз председателĕ Андрианов тата самолета йышăнма килнĕ летчик-орденоносец Акимов юлташсем тухса каланă. Акимов юлташ колхозниксем умĕнче çапăçура тăшмана ним хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе пыма тупа тунă.

Митинг хыççăн летчик Акимов хăй йышăннă самолетпа нумай колхозниксемпе колхозницăсене вĕçтернĕ.

Рационализаципе изобретательство сĕнĕвĕсене пухмалли уйăхлăх

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра кăçалхи июлĕн 20-мĕшĕнче рационализаципе изобретательство сĕнĕвĕсене пухмалли уйăхлăх пуçланнă. Рационализаторсемпе изобретательсем, инженерла-техникла работниксем, стахановецсем уйăхлăха активлăн хутшăнаççĕ. Уйăхлăх пуçланнăранпа сахал мар сĕнÿсем пухнă ĕнтĕ. Инженер Рагулин панă сĕнÿ заводра çулталăк хушшинче 12 тонна тимĕр, çапла 9 пин тенкĕ укçа перекетлеме май парать. Çав сĕнÿшĕн Регулин юлташа 1 023 тенкĕ преми панă. Строгальщик Белов юлташ икĕ сĕнÿ панă ĕнтĕ, халĕ тата тепĕр сĕнÿ пама хатĕрлет.

Искусство хыпарĕсем

■■ Театр сезонĕ уçăличчен Чăвашсен государство академи театрĕн çуртне юсаса аслăлатмалла. Юсав ĕçĕсем Ф. С. Сергеев инженерăн проекчĕ тăрăх пыраççĕ. Халĕ театр çуртне шалтан тата тул енчен илемлетеççĕ; вестибюле, куракансен залне аслăлатаççĕ.

■■ Чăвашсен ташăпа юра ансамблĕн йышне 50 çынна çити ÿстереççĕ. Ансамбле художество тĕлĕшĕнчен илемлетме костюмсем çĕлеме материалсем уйăрса панă.

■■ Шупашкар хулинче пуканесен театрĕ ĕçлеме тытăнать. Театр валли çурт уйăрнă. Театрта ĕçлеме артистсен кадрĕсене пухса çитернĕ.

■■ Шупашкарта картинăсен галлерейине уçма хатĕрленеççĕ. Ăна валли çурт уйăрнă. Выставкăра чăваш художникĕсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче çырнă картинăсем пулаççĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Ренн хули патне çитнĕ, хăшпĕр отрядсем унтан кăнтăралла иртсе кайнă. Тепĕр колонна, Бретань çурутравĕн çурçĕр пайĕнче хĕвеланăçнелле куçса пырса, Доль витĕр тухнă, Диана районне çитнĕ.

Перси хулипе Вильдье хули хушшинчи çултан хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Бомениль хулине туртса илнĕ, халĕ вĕсем Сен-Север-Кальвадос районĕнче çапăçаççĕ. Кунтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Мортен хулине туртса илнĕ. Комон хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра союзниксен çарĕсем Виллер-Бокаж тата Онсэ патнелле куçса пынă. Де-Бюрон вăрманĕ союзниксен аллинче.

Бени-Бокажран çурçĕртерехре тата хĕвелтухăçнерехре тăшман фронтăн пĕтĕм участокĕпе чылаи контратакăсем тунă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă обекчĕсене нумай тĕлте питĕ хаяррăн тапăннă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: юлашки темиçе кун хушшинче акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем каллех чылай малалла куçнă, çавна пула тăшманăн Флоренци хулинчен кăнтăртарахра хăйĕн оборонин линине кĕскетме тивнĕ.

Тăшманăн ирĕксĕрех Эма шывĕ патĕнчи тата çав шывран хĕвелтухăçнерехри çÿллĕ вырăнсем çинчи оборона линийĕ çине куçмалла пулнă.

Флоренци хулинчен кăнтăр хĕвеланăçнерехри районра кĕрешекен новозеландецсен чаçĕсем Пьян Деи Черри ятлă çÿллĕ вырăна туртса илнĕ, вĕсем Флоренци хулине кăнтăр-хĕвеланăç енчен пырса çитесси 4 миля та юлман.

Кунтан сылтăмарах районра Кăнтăр Африка чаçĕсемпе Англи чаçĕсем самаях малалла куçнă, халĕ вĕсем Эма шывĕ патне çывхарса пыраççĕ. Вĕсем Импрунета тата Монтебуони хулисене туртса илнĕ. Англи чаçĕсем самаях малалла куçнă та Инчиза хулине туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче, çавăн пекех американецсен 5-мĕш армийĕн фронтĕнче те, паллă ĕçсемех пулман.

Йĕнер йывăр бомбардировщиксен вăтам соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Кăнтăр Германири промышленность предприятийĕсемпе ытти объектсене тата Çурçĕр-хĕвелтухĕç Италире тăшман усă куракан кĕперсемпе çулйĕрсене тапăннă.

Союзниксен истребительнăй авиацийĕ Белград хули районне тапăннă. Çавăн пекех тата Ницца районĕнчи шоссе çулĕсем çинчи тата чугун çулсем çинчи кĕперсем çине тата тăшманăн Югославипе Албанири вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Дебар хули районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем кунта çĕнĕ вăйсем илсе пынă. Струг хулинчен Дебар хули патнелле куçса пыракан нимĕçсен колоннине Югослави çарĕсем аркатса тăкнă.

Черногорире халăх çарĕн чаçĕсем тăшман çарĕсене çаплах Печ хули патнелле хăваласа пыраççĕ.

Санджакра Югослави чаçĕсем Приеполье-Белоболье районне нимĕçсенчен тасатнă, халĕ вĕсем Сьеница еннелле наступлени туса пыраççĕ.

Хĕвелтухăç Боснире нимĕçсен колонни каллех Власеница хули патне хĕсĕнсе кĕрсе кайма хăтланнă, анчах та ăна аркатса тăкнă.

Хĕвеланăç Боснире нимĕçсем Ливно хулинчен Гламоч патне татса кĕме хăтланнă, анчах та вĕсен ĕçĕ ăнăçман.

Çурçĕр Далмацире Югослави чаçĕсем çаплах наступлени туса пынă, вĕсем Ервеник, Жегар пункчĕсене туртса илнĕ, Буковицăна тата Равны Котар таврашĕнчи территорин пысăк пайне нимĕçсенчен тасатнă. Книн хулинчен кăнтăртарахра халăх çарĕн чаçĕсем Коссово Поле ятлă пункта кĕнĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ВАШИНГТОН, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанри флочĕн командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: Америка авианосецĕсен ушкăнĕ июнĕн 11-мĕшĕнчен пуçласа Японин 22 çар карапне, вăл шутра 3 пысăк авианосецне шыва путарнă е пĕтерсе тăкнă пулмалла. 16 карапне сиен кÿнĕ. Вăл шутра—пĕр пысăк авианосец, йывăр крейсер тата 2 эсминец.

Авианосецсем çинчи самолетсем японецсен 233 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

ЛОНДОН, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бирмăра союзниксен çарĕсем Мьиткьина хулине туртса илнĕ.

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль августăн 2-мĕшĕнче общинăсен палатинче вăрçări лару-тăру çинчен каласа панă. Вăл çапла каланă:

„Эпĕ çапла шухăшлама пуçларăм: Гитлера çĕнтернĕ хыççăн Японие çĕнтерес вăхăт эпĕ пĕр вăхăтра шутланинчен часрах килсе çитĕ, вăл, тен, эпĕ шутланинчен нумай часрах çитĕ".

Черчилль каланă тăрăх, Нормандири вăрçă ĕçĕсем çинчен пĕлтерекен юлашки хыпарсем, пĕтĕмĕшпе илсен, питех те савăнтаракан лайăх хыпарсем пулса тăраççĕ. Атлантика океанĕн çыранĕ тăрăх кăнтăралла наступлени туса пыракан американецсен 1-мĕш армийĕ паха чугун çул центрĕ патне—Ренн хули патне çывхарса çитет те пулмалла ĕнтĕ. „Эпир тăшмантан çынсем тĕлĕшпе те, танксемпе авиаци тĕлĕшпе те нумай вăйлăрах,—тенĕ Черчилль,—эпĕ çакăн пирки текех иккĕленместĕп теме те юрать: фронта татнă хыççăнах эпир маневрлă вăрçă пуçласа ярăпăр".

Италири ĕçсем çинчен асăннă май Черчилль çапла каланă: „Эпир çакна шанма пултаратпăр: Александер генерал тăшмана пĕтĕм кĕрĕпех питĕ вăйлăн çĕмĕрсе пырĕ".

„Çак пĕтĕм тĕнчери кампанисем пирки мана çапла калама тÿрĕ тивет,—тенĕ малалла Черчилль,—эпĕ ку таранччен хамăрăн ку вăрçăри пĕр питĕ хаклă çар çинчен шарламарăм. Ку çар вăл—вырăс çарĕ. Тĕп ĕçе çав çар турĕ, халĕ те вăл нимĕç çарĕн пырши-пакартине туртатурта кăларать (алă çупаççĕ). Сывлăшра та, океансемпе тинĕссем çинче те эпир хамăр лару-тăрăва тытса тăма пултаратпăр. Анчах та тĕнчере нимĕççен çарне çĕмĕрсе тăкса ăна çав тери пысăк çухатусем кÿме пултаракан вăй пулман (тен, эпир ăна тата темиçе çултан тунă та пулаттăмăр), çакна ăна совет çарĕсем кăна тума пултарчĕç. Эпĕ Сталин Маршала саламлатăп (алă çупаççĕ.), вăл хăйĕн çĕршывĕн аслă çулпуçĕ, çавăнпа эпĕ çакна çирĕп ĕненсе тăратăп: эпир Российăпа 20 çуллăха тунă килĕшÿ Европăра мирлĕ пурнăç, йĕркелĕх тата ыррăн малалла ÿсσе пырас ĕçĕн вăрăма пыракан тата чи çирĕп факторĕсенчен чи хăватлă факторĕ пулса тăрĕ".

Малалла Черчилль Англин шалти лару-тăравĕ çинче чарăнса тăнă.

Юлашкинчен, Черчилль Германири çак юлашки кунсенче пулса иртнĕ ĕçсем çинчен асăннă. Вăл çапла каланă: Германин шалти кризисĕ темĕн пек çивĕч пулсан та, пирĕн вăл кризис çине шанса тăмалла мар, союзниксем хăйсен хăвачĕпе хăйсен ĕçĕн тĕрĕслĕхĕ çине кăна шанса тăма тивĕçлĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче
ЮЛАШКИ КУН
американецсен илемлĕ çĕнĕ фильмне
„Серенада Солнечной Долины"
кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
10, 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Часах
документальнăй, саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм
„Живи, родная Беларусь!"
кăтартма пуçлаççĕ

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ агрономипе зоотехника факультечĕсен 1-мĕш курсĕсене вĕренме илет.

Института вăтам шкултан вĕренсе тухнă çынсене, физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе тата литературипе экзамен лайăх панисене илеççĕ. 1943—44-мĕш çулсенче вăтам шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ.

Заявленипе пĕрле ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан документ (документне хăйне, копине мар) тата автобиографи ямалла.

Заявленисене сентябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕмелли экзамен сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен пырать.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4, Сельхозинститут, Приемная комиссия.

Совет Союзĕн Геройне ÿстернĕ çемье

Пĕр-пĕр юмах калама тытăннă чухне асаттесем: „Пурăннă, тет, пĕр карчăкпа старик", тесе калама тытăнатчĕç. Ку юмах мар, чăн пулни. Изедерка ялĕнче, тĕрĕссипе „Ядро" колхозра, старикпе карчăк—Алексей Илларионовичпа Татьяна Николаевна пурăнаççĕ. Килте иккĕн çеç вĕсем. Анчах Илларионовăн кил-йышĕ пысăк.

— Пÿртĕм тулли çыннччĕ, анчах тăван çĕршывăн чиккине вăрçă вут-хĕмĕ пырса перĕнсен, вĕсене вăрçа ăсатрăм. Тăватташне çеç ăсатрăм теме пулать, тăваттăшĕ малтанах Хĕрлĕ Çартаччĕ. Карчăкăн та, манăн та куççулĕ тухрĕ, тен, хăшĕ те пулин таврăнаймĕ, терĕм. Анчах тăван çĕршыва сыхласси нимĕнрен те хаклă,—каласа парать Алексей Илларионович.

Ун патне халь çырусем купипупипех килеççĕ. Кашни кун письмоносец ун патне утать. Акă Григорий çырăвĕ выртать. çулталăк каялла Днепр шывĕн хĕррине тухас умĕн çырнăскер. Çырава, пĕрре вуласа тухнăскере, Алексей Илларионович тепĕр хут тытса пăхрĕ. „Ку манăн чи аслă ывăл пулать, вăл хĕрĕх пĕр çула пусрĕ ĕнтĕ". Ăна вăл чи пирвайхи хут ялти шкула ăсатнă.

„Эпĕ, хаклă аттепе анне, Украина çĕрĕнче çапăçатăп... Çак çырăва вăрçă хирĕнчен çыратăп. Ава вăтă Киев курăнать. Успенски Соборĕ, Крещатик. Вĕсене тăшман аркатса пĕтернĕ. Киев пулăшу кĕтет. Эпĕ çак çĕре сывăраймастăп. Ава пирĕн тăвансем йынăшаççĕ. Чăваш çĕрне çитнĕ пулсан, Гитлер сире те çавăн пек тăватчĕ. Халĕ унăн хура ĕç тăвакан салтакĕсене хăвалатпăр"... Çапла çырать Григорий хăйĕн çырăвĕнче.

* * *

Пирĕн войскăсем хăвăрт юхакан вăтă Днепр хĕррине пырса тухнă. Нимĕççене Днепр лешъенне сирсе ывăтнă. Артиллеристсем кашни кун хĕрÿллĕн çапăçнă. Вĕсен ăнăçуллă ĕçĕ хыççăн пехотинецсем малалла ыткăннă. Вăрçăн кашни сехечĕ геройсем çуратнă.

Григорий Алексеев хăйĕн орудийĕпе шыв урлă каçмалли вырăна хуралланă. Сасартăк вăл хăйĕн çине танксем тапăнса килнине курать. Атакăна сирсе, вăл виçĕ йывăр танка тата икĕ вăтам танка персе çĕмĕрет. Анчах „Тигр" унăн орудийĕ çине тÿрех шуса пыма пуçланă. „Тигр" парăнма шутламан, вăл сартăк туппа пусарса, лапчăтса хунă. Артиллерист ăна мĕнле майпа çĕнтерессине тавçăрса илнĕ. Танк хыçнелле тухса, вăл граната ывăтса янă. „Тигр" урăх каяйман. Вăл Днепр патĕнче çунса кайнă.

Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçнăшăн, Днепр шывĕн хĕвеланăç енчи плацдарма лайăх çирĕплетнĕшĕн тата çав ĕçсенче хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн правительство пĕлтĕрхи октябрĕн 30-мĕшĕнче 183 çынна Ленин орденĕпе тата „Ылттăн Çăлтăр" медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн ятне панă. Вĕсем хушшинче Илларионовăн аслă ывăлĕ красноармеец Алексеев Григорий Алексеевич та пур.

* * *

Григорий вăрçă пуçланнă çулхи август уйăхĕнчен пуçласа ку тарана çитиччен нумай çапăçусенче пулать.

...Калинин вăрманĕ, шурлăхсем. Нимĕç Мускава çавăрса илме аллине кăмтарчĕ. Çав юнлă алла, Европăри хуласене тустарса тухнăскерне, çапса амантнă çĕрте Калинински фронтра Илларионовăн тăвата ывăлĕ пулаççĕ. Анчах пĕр тăвансем хăйсем пĕр фронтра çапăçнине пĕлеймен.

Çакăн чухне вэра пулас Герой Григорий аманать, анчах каллех строя тăрать. Эпĕ ашшĕнчен унăн аслă ывăлĕ вăрçăччен мĕнле пулнине каласа пама ыйтрăм. „Мĕн калас... Тăватă çул вĕренчĕ. Действительнăй службăра артиллерист пулса тăватă çул пурăнчĕ. Арлă-арăмлă пулса икĕ ача ÿстерет. Кочегарта, милиционерта ĕçлерĕ. Хуçалăхри ĕçсене туса пурăнчĕ".

* * *

Тăван уйхир. Çын пĕвĕнчен те çÿллĕ ÿснĕ, йывăр пучахсемлĕ колхоз ырашĕн уйĕ. Çак çĕрĕн тивлечĕпе ÿстернĕ вăл, Алексей Илларионович, хăйĕн юман пек çирĕп ачисене. Кунта Григорий суха тунă, тырă акнă, вырнă. Халĕ, акă, унăн ашшĕ колхоз уйĕпе пырать. Хăйне вăл çак çĕрĕн чăн-чăн хуçи пек туять. 64 çул хушши вăл çак хирĕн çăкрине çинĕ. Катара колхоз хĕрĕсем юрласа тырă выраççĕ. Вĕсем Илларионовăн мухтавлă ывăлĕсене асăнаççĕ. Фронт валли тырă пулать! Уншăн паттăр йĕкĕтсем, пиччесем, аттесем тав тăвĕç.

Акă, пăлан пек ĕнесем мăшлаттарса çăра курăк çисе çÿреççĕ. Аякра—сурăхсем, сыснасем. Кăçал тырă та тулăх пулчĕ. Унăн ывăлĕсем çак пуянлăха сыхлаççĕ ĕнтĕ. Ĕç хыççăн киле таврăнсан вăл арăмĕпе ывăлĕсенчен халь çеç килнĕ çырусене вулама ларать. Çырусене вуласа, вĕсем ватлăхри шăмшака хавхалантараççĕ.

Хăй çути пÿртре çурçĕр иртиччененех пырать. Стена çине пăхсан, эсĕ пысăк кантăклă рамка куратăн. Унта сăнÿкерчĕксем—Алексейăн ывăлĕсем: шофер Александр, Илларион, шофер Флор, старши сержант Михаил, младши лейтенант Егор, летчик Иван, рядовой Павел тата Совет Союзĕн Геройĕ Григорий. Вăл Герой пулнине пĕлсен, ашшĕ унăн сăнÿкерчĕкне чăн варрине, пурне те курăнмалла туса лартрĕ.

Алексей Илларионовичпа Татьяна Николаевнăна эпир хĕрÿллĕ ĕçре тĕл пултăмăр. Вĕсем çамрăксем пекех маттур ĕçлеççĕ. „Эпир тăван çĕршыва пулăшма тăрăшатпăр. Акă, сăмахран, кăçалхи заема икĕ пин тенкĕлĕх çырăнтăм",—тет сакăр боецăн ашшĕ.

Вăл хăй те салтак пулса курнă çын. Çавăнпа та Татьянăн тăхăр салтак кутамки çĕлеме лекнĕ. Тăватă çул çапăçнă хыççăн вăл амланса киле таврăннă. „Эпĕ нимĕççене Варшава патĕнче хытă пĕтертĕм,—тет Алексей Илларионович.—Манăн ывăлăмсем те Варшава патне çитрĕç. Берлина та çитĕç-ха. Аманнă тискер кайăка, Сталин юлташ каланă пек, хăйĕн йăвинче вĕлерĕç".

ЯКОВ СИГАЙ.
Советски район, Изедерка ялĕ.

Орел çыннисем хăйсен хулине юсаса ура çине тăратаççĕ

Орел хулине фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларни августăн 5-мĕшĕнче çулталăк тултарчĕ. Хула çыннисем çав чаплă куна тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленнĕ.

Куллен ĕç пĕтнĕ хыççăн 3.000 çын ытла хулана юсама тухаççĕ. Вĕсем пир-авăр машинисем тăвакан заводăн, апат-çимĕç машинисем тăвакан заводăн тата моторсем юсакан заводăн темиçе цехне юсаса çитернĕ ĕнтĕ. Танкистсен паркне йĕркене кĕртнĕ. Ока шывĕ хĕрринчи парка—хула çыннисем канма çÿрекен парка — юсаса çитереççĕ. Урамсемпе площадьсенче илем кÿрекен йывăçсем 12.000 тĕп лартнă тата чечексем нумай лартнă. Хулари тĕп урама—Ленин ячĕпе тăракан урама — асфальт сарнă. Водопровода юсаса çитернĕ. (ТАСС).

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00621. Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. д. Тираж 16.000 экз.